# Район кунĕпе саламлатпăр!


Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

10-11 (7544-7545) №№ ✻ Шăмат кун, 2008 çулхи февралĕн (нарăс) 9-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


## Килĕштерсе ĕçлесен, ăнăçу пулатех

***Паян Шупашкарта К.Иванов ячĕллĕ Чăваш Патшалăх академи драма театрĕнче районти ĕç коллективĕсен савăнăçлă пухăвĕ иртет. Унта районăн 2007 çулхи социаллă-экономика аталанăвне пĕтĕмлетеççĕ, 2008 çулхи задачăсене палăртаççĕ, ĕçре малтисене чыслаççĕ. Мĕнле çитĕнӳсемпе кĕтсе илет районăмăр хăйĕн черетлĕ çуралнă кунне? Çак ыйту тавра пулчĕ те район пуçлăхĕпе Ю.А. ИВАНОВПА йĕркеленĕ калаçу.***

**– Юрий Александрович, мĕн палăртса каланă пулăттăр иртнĕ çулхи ĕç-хĕл пирки?**

– 2007 çул черетлĕ яваплă çулталăк пулчĕ. Выранти хăй тытăмлăх органĕсем граждансемпе пĕр вĕçĕм тата пур енлĕ пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлеме тăрăшрĕç, ял тăрăхĕсен территорийĕсенче мĕн пулса иртнишĕн, обществăлла инфраструктурăна пулăшмалли тата аталантармалли полномочисем куçнишĕн, муниципаллă бюджетсене йĕркелессишĕн, территорисенчи социаллă-экономика аталанăвне хавхалантарассишĕн яваплăха ытларах туйма пуçларĕç.

Муркаш районĕ промышленноç тата ял хуçалăх таварĕсем туса кăларассипе, республикăри ытти районсемпе танлаштарсан, пысăк вăй пулса тăрать. Коллективсем, районти промышленность тата ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисем йĕркеллĕ ĕçлесе пыни, ума лартнă задачăсене ăнланса, тата вĕсене районпа ял тăрăхĕсен активĕсемпе районти депутатсен корпусĕпе пĕр тĕллевлĕн пурнăçлани промышленность тата ял хуçалăх продукцийĕсене туса илессинче лайăх кăтартусем тума май пачĕ.

**– Чи малтан ял хуçалăхĕнчи ларутăрупа паллаштарсан аванччĕ.**

Ял хуçалăх продукцине туса илессин индексĕ пысăк тата вăтам предприятисемпе 101,5 процентпа танлашрĕ, 2006 çулта ку кăтарту 94,4 процентпа танлашнăччĕ. Пур тĕрлĕ хуçалăхсене шута илсен, 2007 çулта ял хуçалăх продукцине 1485,4 млн. тенкĕлĕх туса кăларнă. Çак калăпăшран 39 процентĕ ял хуçалăх предприятийĕсен, ытти 61 процентне районта пурăнакансен килти хушма хуçалăхĕсенче туса илнĕ.

Пĕтĕмпе районта 2007 çулта, ампар виçипе шутласан, 18,7 пин тонна тыră туса илнĕ. 2006 çулхипе танлаштарсан, 27 процент сахалтарах. Районĕпе вăтам тухăç 17,1 центнерпа танлашрĕ.Чи пысăк тухăçлă тыр-пул Ильич яч. хис. хуçалăхра çитĕнтерчĕç – кашни гектартан 38,8 центнер (ертӳçи – Игорь Васильевич Николаев). Чкалов яч. хис. хуçалăхра тухăç 32,5 центнерпа (ертӳçи – Павел Геннадьевич Ефимов), «Восток» хуçалăхра 23,2 центнерпа (ертӳçи – Михаил Николаевич Шишокин), Суворов яч. хис. хуçалăхра 22,3 центнерпа (ертӳçи – Владимир Славич Андреев) танлашрĕ.

Пур тĕрлĕ хуçалăхсемпе илсен, çĕр улмие иртнĕ çул виçĕм çулхинчен 20,4 процент ытларах туса илнĕ. Вăтам тухăç районĕпе 184,9 центнерпа танлашрĕ.Чи пысăк тухăç Ильич яч. хис. хуçалăхра – 296,4 центнер (ертӳçи – Игорь Васильевич Николаев), «Востокра» – 155 центнер (ертӳçи – Михаил Николаевич Шишокин), «Ударникра» – 152,5 центнер (ертӳçи – Платон Павлович Давыдов) пулчĕ.

Туса илнĕ пĕтĕмĕшле ял хуçалăх продукцийĕсен 69 процентĕ - выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ. Кашни ĕнерен вăтамран 3689 килограмм сĕт суса илнĕ. Пур тĕрлĕ хуçалăхсемпе шутласан, сĕте пĕтĕмĕшле пĕлтĕр виçĕм çулхинчен 5,6 процент, аш-какай 6,2 процент ытларах туса илнĕ.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче ытти регионсенчи ĕç опытне тĕпе хурса ĕçлени чылай ял хуçалăх предприятине ӳсĕмсем тума май пачĕ. Вĕсене асăнса хăварасах килет: Ильич яч. хис. (ертӳçи – Игорь Васильевич Николаев), Суворов яч. хис. (ертӳçи – Владимир Славич Андреев), Чкалов яч. хис. (ертӳçи– Павел Геннадьевич Ефимов), «Герой» (ертӳçĕ тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ –Геннадий Семенович Пискарев) хуçалăхсем.

Çакна та палăртма кăмăллă, «Муркашри чăх-чĕп фабрики» (ертӳçи – Николай Григорьевич Ванеркин) çулсеренех çăмарта туса илессине ӳстерсе пырать. Иртнĕ çулта кунта кашни чăхран 315 çăмарта илнĕ.



Ĕçри ӳсĕм, уйрăмах ял хуçалăхĕнче, кашни çын хăйĕн вырăнĕнче хăй ĕçне пĕлсе, тĕплĕн тата тăрăшса пурнăçланинчен килет: ертӳçĕрен пуçласа механизатор, выльăх-чĕрлĕх пăхакан, уй-хир ĕçченĕ таранах. 2007 çулхи ĕç пĕтĕмлетĕвĕсемпе çак ĕçченсем уйрăмах тав сăмахне тивĕç: Александр Петрович Александров – Ильич яч. хис. хуçалăх тракторисчĕ, Иван Валерианович Степанов – «Ударник» хуçалăх водителĕ, Николай Витальевич Павлов – «Бархаткин» хресчен фермер хуçалăх комбайнерĕ, Ольга Витальевна Петрова – «Герой» хуçалăх доярки, Алина Валерьяновна Филиппова тата Светлана Леонидовна Яковлева – Суворов яч. хис. хуçалăхри сысна пăхакансем, Светлана Васильевна Вершкова, Нина Анисимовна Захарова тата Иван Афанасьевич Данилов – «Оринино» хуçалăхри măйракаллă шултра выльăх самăртакансем, Светлана Васильевна Любимова – «Муркашри чĕх-чĕп фабрикинчи» чăх-чĕп пăхакан, Августина Кирилловна Нодыкова – «Свобода» хуçалăх конюхĕ, Светлана Алексеевна Иванова тата Ретина Меркурьевна Соловьева – «Герой» хуçалăхри сурăх пăхакансем, Василий Ильич Яковлев – Мичурин яч. хис. агрофирма чикĕллĕ яваплăхлăхлă обществăн хурт-хăмăр ăсти тата ыттисем те.

Иртнĕ çул «АПК аталантарасси» приоритетлă наци проекчĕ тата малтанхи программăсем ăнăçлăн пурнăçа кĕрсе пычĕç. Агропромышленность комплексĕн организацийĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем, çавăн пекех килти хушма хуçалăхсем çăмăллатнă кредитсем илчĕç. 982 килти хушма хуçалăх 2007 çулта пурĕ 163,8 млн. тенкĕлĕх, 2 фермер хуçалăхĕ 2,4 миллион тенкĕлĕх, ял хуçалăх предприятийĕсем 76,2 миллион тенкĕлĕх илчĕç патшалăх пулăшăвне. Çапла вара пурĕ 242,4 млн. тенкĕлĕх кредит ресурсĕсемпе усă курнă.

Паян манăн килти хушма хуçалăха аталантарассипе ăнăçлă ĕçлекенсене те ятранах асăнса хăварас килет. Мăн Шашкарти Марина Николаевна Мерлова, Кăпасри Владимир Геннадьевич Федоров, Ситуккассинчи Александр Федорович Петров, Патаккассинчи Илья Демьянович Кольцов, Купăрляри Михаил Николаевич Васильев чăннипех те тав сăмахĕсене тивĕç.

Кашни ял çыннине паян оборудовани пĕччен туянма йывăр. Выльăх апачĕ те çителĕклĕ кирлĕ, тĕрлĕ витаминлă апатçимĕç, ветеринари препарачĕсем те кирлĕ пулаççĕ. Çавăнпа та кашни ял тăрăхĕнче потребительсен кооперативĕсем туса хуни çак ыйтусене татса пама май парать. Паянхи куна районта 18 кооператив, вĕсенчен 7-шĕ аккредитаци витĕр тухнă. Кооперативсене малалла аталантарас тĕллевпе оборудованипе техника туянас тесен конкурса хутшăнма пултараççĕ, çавăн пекех çăмăллатнă кредитсем те илме пултараççĕ.

**– Промышленноç мĕнле аталанать районта?**

– 2007 çулта промышленноç продукцине ытларах туса кăларас задачăна пурнăçларăмăр. Иртнĕ çулта туса кăларса реализациленĕ таварсен, пурнăçланнă ĕçсен тата панă пулăшусен индексĕ 145,6 процентпа танлашрĕ. Урăхла каласан, çак ĕçсене пĕтĕмпе 871,9 млн. тенкĕлĕх пурнăçланă.

Йĕркеллĕ аталанакан предприятисенче пултаруллă, ĕçе, производствăна йĕркелесе пыма пĕлекен ертӳçĕсем, специалистсем ĕçлеççĕ. «Сеспель» чикĕллĕ яваплăхлă общество (ертӳçи – Владимир Александрович Бакшаев), 2006 çулхипе танлаштарсан, 2,1 хут ытларах продукци туса кăларса реализацилерĕ. Асăннă предприятире акă темиçе çул ĕнтĕ Сергей Александрович Налимов слесарьсен бригадирĕ, Алексей Анатольевич Катин газоэлектросварщик, Валерий Анатольевич Андреев водитель ырми-канми ĕçлеççĕ.

«Муркашри кирпĕч завочĕ» акционерлă усă общество та (ертӳçи – Владимир Петрович Тукмаков) производство тухăçлăхне 2,6 хут ӳстерчĕ. Кунта ĕçлекен Дмитрий Вячеславович Никифоров, Ирина Владимировна Зайцева, Эльвира Борисовна Павлова рабочисем ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ.

«Моргаушимежрайгаз» филиалĕ вара иртнĕ çул виçĕм çулхинчен кăтартăва 1,6 хут ӳстерме пултарчĕ. Хальхи вăхăтра 10876 килте е 81 процент чухлĕ çут çанталăк газĕпе усă кураççĕ. Социаллă тата производство объекчĕсене 140 ытла котельнăй ăшăтса тăрать. Асăннă предприяти ертӳçипе Рашит Халиуллович Чебеновпа пĕрле кунта Владимир Ильич Колбасов, Георгий Николаевич Митрофанов, Елена Порфирьевна Колбасова мастерсем тăрăшса ĕçлеççĕ. «Милград» чикĕллĕ яваплăхлă общество та (ертӳçи – Александр Платонович Давыдов) сĕт-çу тирпейлес производство тухăçлăхне хăпартса пырать.

**– Суту-илӳ сферине илес пулсан, пирĕн районти кооператорсенчен вĕренмелли сахал мар пек туйăнать.**

Районти суту-илӳ сфери те ăнăçлă аталанса пырать. Халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессипе конкретлă мерăсем йышăнатпăр. Пур тĕрлĕ каналсемпе шутласан, 2007 çулта ваккăн сутмалли тавар çаврăнăш калăпăшĕ 485,0 млн. тенкĕпе танлашрĕ. Ку вăл виçĕм çулхинчен 27 процент нумайрах. Çак суммăн ытларах пайне – 75 процентне (368 млн. тенкĕ) Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен (ертӳçисем Борис Васильевич Андреев тата Людмила Петровна Майкова) потребкоопераци предприятийĕсем тунă. Районти потребительсен обществисем «АПК аталантарасси» наци проектне пурнăçланă çĕрте те хастар: суту-илӳ сечĕсен структурине улăштараççĕ, халиччен йăлара пулман ĕçсене пурнăçлаççĕ. Кооператорсемпе ял хуçалăх секторĕ хушшинчи çыхăну та çирĕпленсех пырать: ял хуçалăх продукцине туянассипе, вĕсене тирпейлессипе, вырнаçтарассипе ĕçлеççĕ. Çавăнпа пĕрлех килти хушма хуçалăхсенче çитĕнтернĕ ял хуçалăх продукцине Шупашкарти пасарсенче те хаваспах туянаççĕ. Ял хуçалăх продукцине хатĕрлесси иртнĕ çул виçĕм çулхинчен 41 процент чухлĕ ӳсрĕ, 37,4 млн. тенкĕпе танлашрĕ.

Çулсеренех Мăн Сĕнтĕрпе Муркаш райповĕсем Чăвашпотребсоюз системинче çеç мар, Раççей Федераци шайĕнче те пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ, малта пыраççĕ. Паян эпир çак сферăри ĕç маçтăрĕсемпе – «Шуçăм» кафе аслă поварĕпе Елизавета Александровна Ивановапа, «Илем» кафе кондитерĕпе Феофила Яковлевна Воробьевапа, Мăн Сĕнтĕр райповĕн хатĕрлевçипе Тамара Петровна Мерловапа, «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн çăкăр пĕçерекенĕпе Неонила Николаевна Мишкинапа, Отарккăри çăкăр пекарьнин операторĕпе Валентин Николаевич Матвеевпа, Муркаш райповĕн водителĕпе Владимир Юрьевич Ивановпа чăннипех те мухтанма пултаратпăр.

**– Тӳлевлĕ пулăшусем парасси мĕнле аталанса пырать?**

– Таварсен рынокĕпе пĕрлех пулăшусем парассин рынокĕ те аталанать. Пĕлтĕр пĕтĕмпе 66,7 млн. тенкĕлĕх тӳлевлĕ пулăшусем панă. Ку вăл виçĕм çулхинчен 7 процент ытларах. Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх (ертӳçи – Николай Александрович Шишкин) Валерий Григорьевич Петров водитель, Владимир Николаевич Павлов участок мастерĕ, Валерий Геннадьевич Веселов электрогазосварщик, Владимир Алексеевич Хлашев экскаваторщик, Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх ( ертӳçи – Юрий Львович Петров) Александр Александрович Ястребов экскаваторщик, Светлана Петровна Данилова газооператор, Борис Александрович Васильев столярплатник уйрăмах тăрăшуллă пулнипе коммуналлă хуçалăх объекчĕсем пĕр чарăнусăр ĕçлеççĕ.


**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**


## Çĕршывра

### Социаллă сферăна аталантарасси малти вырăна тухать



**Д.А. Медведев:**

**– Чăваш Республики вĕрентӳпе сывлăха сыхлассине çĕнетсе улăштарассипе малтисен ретĕнче. Унăн ыттисене кăтартмалли пур. Сăмах кунта вĕсем пухнă ырă опыта ытти регионсем те, вырăнти условисене шута илсе, усă курмалли пирки пырать.**

РФ Правительствин пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Д.А. Медведев Раççей Президенчĕ çумĕнчи наци проекчĕсене пурнăçа кĕртессипе тата демографи политики енĕпе ĕçлекен Канашăн президиумĕн ларăвне ирттернĕ. Ларура регионсенче вĕрентĕве тата сывлăха сыхлассине комплекслă çĕнетсе улăштарас ыйтусене пăхса тухнă. Вырăнсенче çак проектсене вăя кĕртни, палăртнă пĕрремĕш вице-премьер, социаллă сферăна пĕтĕмĕшле аталантарма май парать.

Комплекслă проектсене вăя кĕртекен регионсенче шкулсен пурлăх бази çирĕпленет, учительсен ĕç укçи пысăкланать. Вĕрентӳ учрежденийĕсем хушшинче конкуренци ӳсет.

Медицина пулăшăвĕ парассине пахалăх шайĕпе, палăртнă Д. Медведев, пĕр стандарта лартмалла, профилактика медицинине аталантармалла, полиссене ирĕклĕн çӳрессине вăя кĕртмелле, медицина учрежденийĕсен хăй тĕллĕнлĕхне ӳстермелле.

## Ĕçре маттуррисене чыслатпăр

***Район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕ***
***2008 çулхи февралĕн 7-мĕшĕ 69 №***

### Районти предприятисем, организацисем тата учреждениcем хушшинчи экономика ăмăртăвĕн 2007 çулхи итогĕсем çинчен

Экономика ăмăртăвĕ ирттермелли положенипе тата предприятисем, организацисем, учреждениcем хушшинчи экономика ăмăртăвĕн итогĕсене пĕтĕмлетекен комисси йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн çапла **йышăнатăп:**

1. Районти предприятисем, организацисем тата учреждениcем хушшинчи экономика ăмăртăвĕнче çĕнтернĕ тесе шутлас:

**1. Ял хуçалăх предприятийĕсем хушшинче:**

1-мĕш вырăнта – «Ударник» сăнавлă производство хуçалăхĕ;

2-мĕш вырăнта – Муркашри чăх-чĕп фабрики патшалăх предприятийĕ, «Герой» хуçалăх.

3-мĕш вырăнта – «Восток» тата Ильич яч.хис. хуçалăхсем. «Свобода», «Оринино» хуçалăхсем лайăх ĕçленине палăртас.

**2. Промышленноç тата пулăшу паракан предприятисем хушшинче:**

1-мĕш вырăнта – «Сеспель» акционерлă хупă общество;

2-мĕш вырăнта – Мăн Сĕнтĕр райповĕ;

3-мĕш вырăнта – Муркаш райповĕ.

«Муркашри кирпĕч завочĕ» усă акционерлă общество лайăх ĕçленине палăртас.

**3. Ял тăрăхĕсем хушшинче:**

1-мĕш вырăна парас мар;

2-мĕш вырăнта – Муркаш ял тăрăхĕ;

3-мĕш вырăнта – Катькас ял тăрăхĕ.

Йӳçкасси тата Москакасси ял тăрăхĕсем лайăх ĕçленине палăртас.

2. Мала тухнă предприятисене, организацисене тата учреждениcене диплом тата укçан премили парса хавхалантарас:

1-мĕш вырăнсемшĕн – 1 степеньлĕ диплом, 12000 тенкĕ;

2-мĕш вырăнсемшĕн – 2 степеньлĕ диплом, 8000 тенкĕ;

3-мĕш вырăнсемшĕн – 3 степеньлĕ диплом, 5000 тенкĕ.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Йыхрав

### Депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ ларăвĕ

Депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ 24 ларăвĕ февралĕн 15-мĕшĕнче 14 сехетре райадминистрацин ларусен залĕнче уçăлать.

Кун йĕркине çак ыйтусене кĕртме сĕннĕ:

1. «Физкультурăпа спорта районта 2008-2010 çулсенче аталантарасси» районти тĕллевлĕ программа çинчен.
2. Арендăна çĕр лаптăкĕсене памалли йĕрке тата районти вырăнти бюджет тупăшлăхне шутламалли коэффициента çирĕплетесси çинчен.
3. 2008 çулта муниципаллă пурлăха приватизацилемелли прогнозлă план (программа) çинчен.
4. Районта 2007-2009 çулсенче преступлени тунине хирĕç кĕрешмелли комплекслă программăна пурнăçлани çинчен.
5. Районти муниципаллă служащисен должноç окладĕсене, уйăхсерен паракан тата ытти хушма тӳлевсен виçисене çирĕплетесси тата вĕсене пурнăçламалли йĕрке çинчен...

Ларăва ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, учреждени ертӳçисене, райадминистрацин яваплă ĕçченĕсене чĕнеççĕ.